**Тăвар**

Кам ман çумра,кампа эп калаçатăп,
Кампа чĕрем ăшне кĕрсе тухатăп,
Курма, епле вăл тăрмашса ĕçленине,
Тымарĕсен пăрăхĕ тăрăх
хăй хăватне чуптарнине.

Миçе çĕр-пин, миçе мĕльюн тымарлă эсĕ,
Çавна эс ху пĕлетĕн-ши, чĕрем?
Пĕлместĕн.
Акă эпĕ те пĕлместĕп,
миçе чĕре мана вулать, тăнлать,
Ман сăввăм-юррăмсен хавалĕпе
миçе чĕре çулçӳреве тухать
эп çитсе курнă хутлăха,
Ман куçăм-пуçăм
Сăнарланă ырлăха курма-туйма...

Миçе этем çырма пуçлать
сулмаклă юрă-кĕвĕ-сăвă? –
Сăмах – çурта е çу, е ăвă...

Чĕре ыйтни –
юн пĕрчисен сикки:
Ачи-пăчи – ашшĕ-амăшĕнчен
йăпăлтатса,
тархасласа,
кутăнланса
Мĕн кирлине пама ыйтни.
Мĕскер памаллине чĕре пĕлет,
Мĕн чухлĕ кирлĕ? – çавăн чухлĕ валеçет.

Ман ăшăмран – ман юнăм пĕрчисем
тĕртсе кăларнă тар, куççуль –
Сĕтел çинчи хута йывăрлатать.
Ман шурă хутăм – шухăшсен ани.
Акни шăтса тухать, аталанать,
ĕç-хĕлĕмĕн хампарĕ-пӳлмине
пуянлатать...
Кĕнекеме кĕрсе тухакана
апат лартать – ăш кантарать,
а тен, чыхăнтарать...

Кăна пĕлме мана та, чĕреме те кирлĕ мар.
Апат – тăварсăр тутлă мар.
Пур апатра та – тарпа юн, куççуль тути.
Чун панă вашават,
Чун панă тараватçути.

*Асамат, С. Тăвар / С. Асамат // Чăваш литературин антологийĕ. – Шупашкар, 2013. – [Т. 2] : Поэзи. – С. 542.*